25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
МАЙ
20
ЮНКУН
115(6050) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Çуракине ирттерес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Севечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

26. Советски районри Кивĕ Тинкеш ялсоветне кĕрекен **«Новый путь»** колхоз (колхоз председателĕ **М. Семенов** юлташ). Тĕштырă культурисене колхоз 6,5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Мĕнпурĕ 50 гектар акнă. Акмалли çĕр лаптăкĕн 90 процентне сеялкăпа акса хăварнă. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ишкек курнă колхозниксене пулăшма планпа ирттерсе 2 гектар акнă. Акса хăварнă çĕр лаптăкне 40 центнер минераллă удобрени хурса çемçетнĕ. Акара тырă акакансем —**А. Прокопьева, М. Евпалова, И. Храбров, А. Трофимова** юлташсем фронтри пек ĕçленĕ, вĕсем кулленхи нормăна яланах 120—125 процент тултарса пынă, сухаçăсем—**А. Евпалова, Е. Васильева**, нормăна кулленех 150 процент тултарса пынă.

27. Красноармейски районри **«Родина» колхоз** (колхоз председателĕ **Терентьев** юлташ). Колхоз 8 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Мĕнпурĕ 49,7 гектар акнă. Колхоз оборона фондне хывма планран ирттерсе 1,5 гектар акса хăварнă. Сухаçăсем—**В. Кириллова, К. Андреева, П. Фомин,** 62 çулти **И. Капитонов** юлташсем нормăра кăтартса панă 1 гектар вырăнне кунсеренех 1,3—1,4 гектар сухаланă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тылра пыракан партизанла кĕрешӳре уйрăмах палăрнă С. А. Ковпак, И. И. Копенкин, А. Н. Сабуров, А. Ф. Федоров юлташсене Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç тылра пыракан партизанла кĕрешӳре хăюлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене ЛЕНИН орденĕпе «ЗОЛОТАЯ ЗВЕЗДА» **медаль парса** СОВЕТ СОЮЗ ГЕРОЙĔН званине парас:

1. Сидор Артемьевич **Ковпака,**
2. Иван Иосифович **Копенкина,**
3. Александр Николаевич **Сабурова,**
4. Алексей Федорович **Федорова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти майăн 18-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Электропромышленность Халăх Комиссариачĕн Верх-Исетскри металлурги заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Çĕршывăн оборони валли специальнăй хурçă тăвас тĕлĕшпе правительство заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Электропромышленность Халăх Комиссариачĕн Верх-Исетскри металлурги заводне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти майăн 18-мĕш.

Уралри тысячниксен канашлăвĕ

СВЕРДЛОВСК, майăн 18-мĕш. (ТАСС). Облаçри тысячниксен малтанхи канашлуне вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем, техникăна тĕплĕн вĕренсе çитнĕ рабочисем, предприятисен директорĕсем, обществăллă организацисен представителĕсем пуçтарăннă. Канашлăва пухăннă çынсем хушшинче Сталинла премин лауреачĕсем — фрезеровщик Босый, горняк Янкин, хурçă шăратас ĕçĕн паллă ăстаçисем Сидоровский, Базетов, Валеев, проходчик Иван Завертайло тата ыттисем те пур.

Партин облаçри комитечĕн секретарĕ Аристов юлташ стахановецсен пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕн задачисем çинчен доклад туса панă хыççăн премире Н-ски заводра тысячниксен движенине пуçласа яракан Борисов юлташ сăмах тухса каланă. Канашлу Красноуральскри 8-мĕш №-лĕ ремесленнăй училищĕре вĕренекен Потапенко юлташ сăмахне интересленсе итленĕ. Потапенко хăй мĕнле майпа çитĕнӳсем тунни çинчен ăнланмалла, уçăмлăн каласа панă. Çак çамрăк тысячник майăн 11-мĕшĕнче хăйĕн пĕтĕм уйăхри заданине тултарнă, майăн 13-мĕшпе 14-мĕш кунĕсенче вăл тата тепĕр уйăхри нормăна тултарнă. Çавăн пекех Марценюк юлташ, Сталинла премин лауреачĕ Янкин юлташ, тысячниксем — Никитин, Коршунов, Базетов, Осипова, Куликов тата ытти юлташсем те производствăри творчествăллă пуçарулăх çинчен, технологири çĕнĕ меслетсем çинчен каласа панă.

Вĕсен сăмахĕсенче пуринче те пĕр шухăш палăрса тăрать: пĕтĕм Союзри ăмăртура малти вырăна йышăнасси, металл, самолетсем, танксем, орудисем планра кăтартнинчен ытларах туса парасси, çапла майпа тăшмана хăвăртрах çĕнтересси.

Канашлăва пухăннă çынсем пурте пĕр кăмăллă пулса Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă.

Профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросне хатĕрленес ĕçе вăйлатмалла

Майăн 18-мĕшĕнче профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи (иккĕмĕш) кросĕн Чăваш республикинчи организациллĕ комитечĕн ларăвĕ пулса иртрĕ.

Организациллĕ комитет «Профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи (иккĕмĕш) кросне хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен» ВЛКСМ Канаш райкомĕн секретарĕ Краснов, физкультурăпа спортăн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи инспекторĕ Патрикеева, Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ шкулти комсомол организацин секретарĕ Кошелева тата «Учитель» спорт обществин Чăваш совечĕн председатель заместителĕ Клоповская юлташсен доклачĕсене итлесе сӳтсе-яврĕ.

Оргкомитет хăйĕн решенийĕнче çаксене палăртрĕ: профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кросне хатĕрленесси Канашпа Хĕрлĕ Чутай районĕсенче питех те вăраххăн пулса пырать. Кроса хутшăнакансен сывлăхне тĕрĕслеме ялсенче тата колхозсенче медицина пункчĕсем уçман, сывлăха тĕрĕслес ĕçе организацилемен. Çуллахи кроса хатĕрленес ыйтăва комсомолăн пуçламĕш организацийĕсенче тата профсоюзсен организацийĕсенче нумайĕшĕнче халиччен те сӳтсе-явман.

Оргкомитет комсомолăн Канаш тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи райкомĕсене, «Учитель» спорт обществин Чăваш советне асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе конкретнăй ĕçсем тума хушрĕ. **Кроса хутшăнакансене подразделенисем тăрăх уйăрса тухассине майăн 22-мĕшчен туса çитермелле, пур çĕрте те тренировкăллă занятисем ирттерме тытăнмалла.**

Кроса хатĕрленнĕ май утассипе, чупассипе ăмăртусем ирттермелле, тактикăна вĕренес тĕлĕшпе походсем тата спорт праздникĕсем туса ирттерес пулать. Тренировкăсемпе походсене массăна нумайрах явăçтармалла.

Оргкомитет профсоюзсемпе комсомолăн çуллахи кроссне ирттерессипе Мари АССР-пе социализмлă ăмăртăва тухма йышăнчĕ. Ăмăрту договорĕ тăрăх комсомолецсен, профсоюз членĕсен (медицина тĕрĕслевĕнче кроса хутшăнма юрăхлă пулнисем палăртнисен) çĕр процентĕпех тата ĕçсынисен анлă массисен çуллахи кроса хутшăнмалла. Кроса хутшăннисенчен 90 проценчĕн ГТО нормисене памалла. Кроса хатĕрленнĕ май стадионсемпе спортплощадкăсене юсаса çитермелле.

Кроса лайăх пахалăхсемпе ирттерес тĕллевпе социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 18-мĕшĕнче Харьков енче пирĕн войскăсем, наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, малалла куçнă.

Керчь çурутравĕ çинче Керчь хули районĕнче хĕрӳллĕ çапăçусем пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулса иртмен.

Майăн 17-мĕшĕнче нимĕçсен 64 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 21 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче совет самолечĕсем противникăн миноносецне путарнă.

* * *

Майăн 17-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 6 танкне, войскăсемпе боеприпассем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла, 8 полевой тата зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине виçĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче пирĕн чаçсем, противник хирĕç тăнине çĕмĕрсе, малалла куçса пыраççĕ. Фронтăн участокĕсенчен пĕринче гитлеровецсем темиçе хутчен танксемпе контратака тунă. Ротко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсемпе командирсем тăшмана хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçнă, вĕсем нимĕçсен 30 танкне пĕтерсе тăкнă. Бунтман юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн подразделенийĕсенчен пĕрин танкисчĕсем нимĕçсен темиçе танкне, 6 полевой орудине, 7 противотанковăй туппине, пулеметсен 10 йăвине тата гитлеровецсене 300 çынран кая мар пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн часть противника халăх пурăнакан вăйлăн çирĕплетнĕ пунктран хĕссе кăларнă тата снарядсен 2 складне, 4 оруди, 11 пулемет, 350 ещĕк мина, 10 автомашина, 10 радиостанци, 25 мотоцикл, 130 велосипед тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, 2 кун хушши çапăçса, нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Артиллери тата разведка тăвакан группăсем нимĕçсен темиçе орудине, темиçе миномётне тата темиçе станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн разведчиксем вăрман хĕрринче тăшманăн маскировка туса лартнă 2 танкне курнă та ун çинчен артиллери батарейин командирне старши лейтенанта Подуста пĕлтернĕ. Батарея пеме тытăннă та пĕр танка пĕтерсе тăкнă. Тепĕр танкне кӳршĕри батарея персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Скоробогатов юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллери дивизионĕ тăшманăн фронт çывăхĕнчи аэродромĕ çине сасартăк пеме тытăннă. Разведка пирĕн артиллеристсем нимĕçсен «Юнкерс—52» йышши виçĕ моторлă 10 самолетне пĕтерсе тăкнине палăртнă.

* * *

Смоленск облаçĕнче нимĕçсен тылĕнче кĕрешекен партизансен «Мороз» ятлă отрячĕ, икĕ уйăх хушшинче оккупантсемпе темиçе хут та тытăçса илсе, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерĕнчен кая мар пĕтерсе тăкнă, 3 оруди, 119 автомашина, 37 мотоцикл тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 100-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 54-мĕш полкран тыткăна лекнĕ унтер-офицер Гергардт Будик çапла каланă: «Пирĕн дивизи пысăк çухатусем тӳсрĕ. Апрель уйăхĕн пуçламĕшĕ тĕлне ротăсенче 30—40-шер çын кăна тăрса юлнă. Пĕр вăхăт хушши эпĕ Сталино хулинче çар тĕрминче лартăм. Çав тĕрмере 100-мĕш дивизири салтаксем питĕ нумаййăчĕ, вĕсене çапăçура хăранă тесе çар судне панă пулнă. Тĕрмере 65 хорват-дезертир ларатчĕ».

* * *

Грексен патриочĕсем фашистла оккупантсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Май уйăхĕн пуçламăшĕнче Фивы хулинчен инçех мар вырăнта Итали салтакĕсене турттарса пыракан поезда крушени тунă. Çак кунсенче Пирей портĕнчен тухнă Итали транспорчĕ çинче взрыв пулнă. Çав судно вара путнă. Табак тюкĕсен ăшне мина хунă пулмалла тесе шухăшлаççĕ. Портри хăшпĕр рабочисемпе служащисене арестленĕ.

Майăн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Харьков енче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Керчь çурутравĕ çинче Керчь хули районĕнче хĕрӳллĕ çапăçусем пулса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Иртнĕ эрне хушшинче, майăн 10-мĕшпе 16-мĕш хушшинче, нимĕçсен авиацийĕ 339 самолет çухатнă. Пирĕн 112 самолет пĕтнĕ.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче пирĕн чаçсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 1.600 çын вилсе юлнă. Тыткăна илнисем пур. Песочин юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем, тăшманăн контратакине сирсе ярса, 300 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пехота орудийĕнчен персе, нимĕçсен икĕ бомбардировщикне ӳкернĕ. Нимĕçсен темиçе танкне пĕтерсе тăкнă, 8 оруди, 6 пулемет, 5.000 мина тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн часть нимĕçсен темиçе контратакине сирсе янă. Тăшманăн 11 танкне çĕмĕрнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 800 çын ытла вилнĕ тата аманнă.

* * *

Уйăх çурă хушши кĕрешсе, Савченко юлташ командир пулса ертсе пыракан авиачасть (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) нимĕçсен 237 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех чаçри летчиксем тăшманăн 122 автомашинине, 50 орудине, 2 танкне, 40 лавне тата горючи тултарнă 7 автоцистернине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче, самолетсем пулăшса пынипе, гитлеровецсем пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Пирĕн артиллеристсем орудисене усă позицие илсе тухса пеме тытăннă та противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 70 çынна пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн атаки путланса ларнă. Старши сержантăн Аверцевăн оруди расчечĕ темиçе хут персе нимĕçсен самолетне ӳкернĕ.

* * *

Старши лейтенант Болондин юлташăн артиллерисчĕсем (Кăнтăр фрончĕ) тăшман колонни куçса пынине асăрханă, вара ун çине вăйлăн пеме тытăннă. Çакă противникшăн кĕтмен çĕртен пулнă пирки гитлеровецсем сахаллăшĕ кăна çăлăннă. Çул çинче тăшманăн 100 вилли ытла выртса юлнă.

* * *

Ленинград облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ майăн 11-мĕшпе 15-мĕш хушшинче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕç оккупанчĕсене 360 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем нимĕçсен танкне, бронемашинине стройран кăларнă тата икĕ çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Партизансен отрячĕсем, В. тата Т. юлташсем ертсе пынипе пĕрлешнĕскерсем, нимĕçсен гарнизонне çĕмĕрсе тăкнă, çавăн чухне противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 85 çынна вĕлернĕ.

* * *

Аялархра нимĕçсен 96-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи велоэскадронри вилнĕ лейтенантăн Зелингерăн записной кĕнекинчен илнĕ сыпăксене пичетлетпĕр: «...Кунта партизансен движенийĕ ытларах та ытларах сарăлса пырать. Малтан партизансем çĕрле кăна связной-мотоциклистсем çине тата пĕччен машинăсемпе лавсем çине тапăнатчĕç. Халĕ вĕсем пирĕн çине кăнтăрлах тата пысăк шоссе çинче те переççĕ. Партизансен хирĕç кĕрешнĕ чух аманнă салтаксем лазаретра нумай. Лейтенант Боген патĕнче пултăм. Ăна та партизансем амантнă... Сакăр кун хушши нимĕн те турттарса килме май килмерĕ, мĕншĕн тесен партизансем чугунçула çĕмĕрсе хунă...: Партизансем çĕрле эпир вырнаçнă вырăна вут тивертсе яма шутлани çинчен сведени илтĕмĕр. Вăйлă охрана кăларса тăратрăмăр. Анчах апла пулин те, ирхине ирех пирĕн çуртсем тата вите çунса кайрĕç. Кам тивертсе янине палăртма май килмерĕ. Часовойсем юнашарах тăнă, анчах нимĕн те курман...: Манăн салтаксенчен пĕри çĕрле урама тухрĕ, вара ăна партизансем амантнă».

* * *

Ленинград фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пирĕн боецсем малалла куçса пынă чухне вăрманта шăтăк курнă, унта 11 красноармеецăн виллине тупнă. Кашни вилле çинчех вĕсене тискеррĕн асаплантарни палăрнă. Красноармеецсене пуç шăммисене çурса пăрахнă, кĕлеткисене касса вакланă, хырăмĕсене çурнă. Гитлеровецсем асаплантарса вĕлернĕ боецсен пичĕсене, аллисене тата урисене нумай çĕртен чиксе пĕтернĕ. Пĕр красноармеецăнне алă пӳрнисене лапчăтнă, тепринне архатĕрне касса пĕтернĕ. Икĕ красноармеецăнне чĕркуççи патĕнчи тата ура тунинчи мышцисене шăмă патне çитиччен касса илнĕ. Кунтах асаплантармалли хатĕрсене те тупнă: хурçăран тунă çивчĕ кинжал, унăн тăршшĕ 80 сантиметр, аврине пăхăртан тунă, кунтах тата пăчкă та пулнă; çак хатĕрсемпе усă курса, гитлерла çынçиенсем тыткăна лекнĕ çынсене асаплантарса вĕлернĕ.

* * *

Германи ялхуçалăхĕнче ĕçлекен ютçĕршыв рабочисем хушшинче нумайĕшне арестленĕ. Пĕлтернĕ тăрăх, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен рабочисем вăрлăхсене пăсса пĕтернĕ тата ятарласах пахалăхсăр акнă.

М. И. КАЛИНИН

ПАРТИЗАНЛА КĔРЕШӲ ÇИНЧЕН

Нимĕçсем оккупациленĕ совет облаçĕсенчи халăха партизанла кĕрешĕве вăйлатса пыма Сталин юлташ чĕнсе калани пысăк вăй пулса тăчĕ. Партизанла движени малалла аталанса пынине тата вăл çурхи шыв пек анлăрах та анлăрах сарăлнине халĕ пурте кураççĕ. Нимĕçсен фашистла çарĕн вăрă-хурахла ашкăнăвĕ, йышăнса илнĕ облаçсенчи халăхсем тĕлĕшпе тăвакан унăн тискер хаярлăхĕ чи мирлĕ халăха та гитлерла бандăсене хирĕç кĕрешĕве илсе кĕрет.

Çапах та, нимĕç оккупанчĕсем мирлĕ халăха ирĕксĕрлени тата хаяр пулни партизанла кĕрешĕве аталантарса пыракан тĕп факторсем пулса тăмаççĕ. Партизанла движение питех те пысăк вăй парса тăракан тĕп çăлкуçсем чылай тарăнрах вырăнта, халăхăн хăйĕн тĕпри никĕсĕсенче выртаççĕ. Çав çăлкуçсене ленинла-сталинла политикăна пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе пырса хывнă, вĕсем пĕр чĕрĕк ĕмĕре яхăн пĕрмаях малалла аталанса пынă. Халĕ вара, пирĕн çĕршывшăн чи йывăр самантра, халăх хушшине Ленин — Сталин партийĕ акнă вăрлăх хăйĕн çимĕçĕсене пачĕ.

Тăшман йышăнса илнĕ совет территорийĕсенчи халăха Сталин юлташ чĕнсе калани — декларации мар, кĕрешме хушни. Вăл витĕмлĕ пултăр тесен, халăха ĕненсе тăни, харпăрхăй вăйне çирĕппĕн шанса тăни кирлĕ. Сталин юлташăн сăмахĕсем вăхăтлăха нимĕçсем оккупациленĕ районсенчи ĕçсынисене хăйсен тарăхăвне, курайманлăхне ĕçе ямалли, пусмăрçăсене ним шеллемесĕр тавăрмалли практикăллă çулйĕре кăтартса пачĕç.

Парти, правительство чĕнсе каланисене совет халăхĕ вĕренсе çитнĕ. Кашни пысăк задачăна татса пама халăха мĕнле хутшăнтарнине курас тесен, совет государствин 25 çул хушшинчи историйĕ çине кăна çавăрăнса пăхас пулать. Харпăрхăйĕн çĕршывне тулашри агрессирен хӳтĕлес ĕçрен пысăкраххи мĕн пулма пултарать-ха?

Германи фашисчĕсем — вăрă-хурахла банда. Ăна шултра капиталистсен-монополистсен пĕчĕк ушкăнĕ пулăшса тăрать.

Çак шайкăшăн кирек мĕнле нациллĕ интерессем те, вĕсем фашистсене пуйтармаççĕ пулсан, ют интерессем пулса тăраççĕ. Вĕсен идеологийĕ, ăна халăх хушшине сараççĕ пулсан, массăсене улталас ĕçе туса тăрать. Халăх массисене суйса улталанине фашистла партире паттăрлăх вырăнне шутлаççĕ.

Фашистсен пуçлăхĕсемшĕн хăйсен салтакĕсем асап курни те нимĕн те мар.

Фашистсен ушкăнĕ салтаксене тата унтан та ытларах вăтам офицерсене те вăрă-хурахла тĕллевсене ĕçе кĕртмелли хатĕр вырăнне хурать, усă курнă хыççăн вĕсене, ниме кирлĕ мар ăпăр-тапăр вырăнне хурса, аякалла кăларса ывăтаççĕ. Фашистсем хăйсен йывăр аманнă салтакĕсене наркăмăш парса вĕлерни, фурансенчен тӳрленсе çитменнисенех малти линисем патне хăвалаласа илсе пыни пурншĕн те паллă. Фашистла пуçлăхсем çапла шутлаççĕ: нимĕç салтакĕсем фронтран тăван çĕршыва мĕн чухлĕ сахалтарах таврăнĕç, фашистсен пуçлăхĕсен канăççăр, пурне те ыйтакан, çилленекен çынсемшĕн çавăн чухлĕ сахалтарах тăрăшма тивĕ, Гитлерпа унăн ушкăнĕ йĕнер çинче çавăн чухлĕ канлĕрех ларĕç.

Пирĕн партизансем çавăн пек тăшмана хирĕç çапăçаççĕ ĕнтĕ, вăл пирĕн халăх тĕлĕшпе кăна мар хаяр, кам ăна малашне кирлĕ мар, вĕсем тĕлĕшпе те вăл хаяр; фашистсем кама шанмаççĕ, вĕсемшĕн кам хăрушăрах, çавсем пирки фашистсем мĕнле хаяр пулни çинчен калама кирлех те мар вара. Фашистсем ирсĕр ĕçсем нумай тунинчен эпир çакна куратпăр: фашистсем хăйсен пусмăрĕ айне тунă халăха вĕлереççĕ, татса вакласа тăкаççĕ, çаратаççĕ тата халăхран мăшкăллаççĕ кăна мар, çамрăксене, ĕçлеме пултаракан арçынсемпе хĕрарăмсене чура туса ĕçлеттерме Германие илсе каяççĕ. Ирĕксĕрлесе илсе кайнă çынсенчен 90 проценчĕ хăйсен тăванĕсем çине нимĕçсем перекен снарядсемпе пульăсене хатĕрленĕ çĕрте каторгăлла ĕçлесе, выçлăхпа вăраххăн вилсе пĕтет тесе шанчăклăнах калама пулать.

Çакăн пек тăшмана ăс-тăна кĕртес тесе, партизансем вĕсем — талăннă çĕршывăн чи хисеплĕ те ырă шухăшлă гражданинĕсем пулнине тăшманăн ăнланăвне кĕртсе вырнаçтарас тесе, тăшмана нумайччен вăйлăн çапас пулать.

Партизансем хĕллехи йывăр вăхăта пурăнса ирттерчĕç, пассивно пулса мар, нимĕç пусмăрçисене пĕрмаях тапăнсасĕнмеллех вăйлăн пыра-пыра çапса пурăнса ирттерчĕç. Çавăн пек çапнисен вăйне фашистсен хăйсен те ирĕксĕрех йышăнмалла пулчĕ. Çакă вара партизансене çуллахи тапхăрта кĕрешме хавхалантараканĕ пулса тăрать.

Нимĕçсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Хĕрлĕ Çара партизансем пысăк пулăшу параççĕ, партизансен отрячĕсем фашистсене çапни вăрçă стратегинче пысăкрах та пысăкрах вырăн йышăнса пырать. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек результатсемпе партизансем кăмăллă пулаççĕ. Çарпа тачă çыхăнса тăрса кĕрешсе, партизансем хăйсем енчен тăшмана çапассине те вăйлатаççĕ, вĕсем тактика тĕлĕшĕнчен кăткăсрах операцисем те туса ирттереççĕ, ялсемпе район центрĕсенчен нимĕçсен пĕтĕм гарнизонĕсене хĕссе кăлараççĕ, чылай территорисене оккупантсенчен ирĕке кăлараççĕ, нимĕç войскисен тылĕнче совет влаçне туса хураççĕ, — мирлĕ вăхăтри влаçа мар, хаяр тăшмана хирĕç кĕрешмешкĕн тупнă тĕрлĕ хĕçпăшаллăсене çĕклекен влаçсене туса хураççĕ.

Çавăнпа та, ахальтен мар ĕнтĕ Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче, Хĕрлĕ Çарăн регулярнăй чаçĕсене кăтартусем панипе пĕрлех, партизансемпе партизанкăсене те заданисем панă.

Хальхи вăхăтри вăрçăра партизанла кĕрешӳ иртнĕ вăрçăсенче пулнинчен нумай анлăрах сарăлчĕ. Вăл халиччен пулнă партизанла кĕрешӳсенчен тарăнраххăн пулса пырать, халăхăн пысăк ушкăнĕсем, вăл шутра хăйсене шеллемесĕр тĕлĕнмелле паттăррăн çапăçакан хĕрарăмсем те, партизансем пулса кĕрешме каяççĕ. Кунпа пĕрлех çакна асра тытас пулать: хальхи вăрçăра партизансем малти вырăнта тăракан техникăпа вăйлăн хĕçпăшалланнă тăшмана хирĕç кĕрешеççĕ. Апла пулсан, фашистла çарсене ăнăçлăн çапмашкăн тата тăшманран тытса илнĕ вăрçă техникипе усă курмашкăн партизанла кĕрешӳре çар ĕçне пĕлни çӳллĕ вырăнта тăмалла. Фашистсем хăйсен пропагандинче пирĕн хресченсен, хула çыннисен ăнланулăхĕпе пĕлӳлĕхĕн çӳллĕшне чакарса кăтартма тем пек хăтлансан та, партизанла кĕрешӳри фактсем вĕсен элекне пĕтĕмпех сиреççĕ.

Партизансен отрячĕсене хутшăннă хресченсем, рабочисем тата интеллигентсем хăйсен аллинчи хатĕрсемпе тата çапăçу условийĕсемпе ăстан усă курма пĕлнине кăтартаççĕ, çакă вара нимĕçсен командованине халран ярать. Çак факта нимĕçсем хăйсем те йышăнаççĕ. Апла пулсан, совет халăхĕн шухăш-кăмăлĕ кăна мар, унăн ăнланулăхĕпе пĕлӳлĕхĕ те çӳллĕ вырăнта тăраççĕ. Кун хыççăн вара, хĕвелтухăçĕнче хăйсен тискер те ирсĕр ĕçĕсене туса, унтан хĕвеланăçнелле çавăрăнса, Европăна хĕвелтухăçĕнчи варварлăхран çăлатпăр, тесе вĕсем пĕр шикленмесĕр суйнине кам ĕнентĕр-ха.

Совет партизанĕсем хăйсен паттăрлăхĕпе тата чăрсăррăн пырса тапăннипе кăна мар, тата пĕлсе вăрçнипе те, вырăссен ăстăнлăхĕпе те нимĕçсен йытă-рыцарĕсене çапаççĕ, малашне тата вăйлăнрах çапĕç.

Партизанла движени — халăх движенийĕ. Вăл политика тĕлĕшĕнчен Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисемпе тачă çыхăнса тăрать. Вăл халăх фашизмла режима совет стройĕпе танлаштарса пăхса курнинчен шăтса ӳсет. Совет стройĕ чухне совет гражданинĕ хăйне хуçа вырăнне шутланă тата шутлать те. Пурнăçа юратса, уншăн тăрăшакан ирĕклĕ çын,—арçын-и вăл, хĕрарăм-и,— вилесле хаяррăн кĕрешмесĕр фашизмла чуралăхпа мĕнле килĕштерме пултартăр-ха! Кун пек килĕштерни ĕлĕк те Русьре нихăçан та пулман, ирĕклĕ совет çĕршывĕнче пушшех çавăн пек туни нихăçан та пулас çук.

Партизансем, совет халăхĕшĕн тавăракансем, кашни тискер ĕçшĕн фашистсене çĕр хут хаяртараххăн тавăрĕç. Çавăн пек тунипе тата çавăн пек туса кăна фашистла бандăна ытти халăхсен прависене хисеплекен тума пулать.

Фашистсене тарăхса курайманни ӳсет, унпа пĕрле вара «Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!» текен сăмахсем палăртса тăракан пĕр шухăшпа тĕллеве тытнă партизансен движенийĕ ӳсет.

Çакăнта ĕнтĕ совет патриотизмĕн вăйĕ, Тăван çĕршыва юратнин тата фашистла мерзавецсене тарăхса курайманнин вăйĕ. Çакăнта ĕнтĕ халăхăн партизанла анлă движенин вăйĕ, вăл пирĕн çĕр çинчен фашистла саранчана тасатма Хĕрлĕ Çара пулăшса пырать.

Хресченсем карательнăй отряда хирĕç çапăçни

БРЯНСК ФРОНЧĔ, майăн 17-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Фашистсем Орел облаçĕн хăйсем оккупациленĕ çĕрти Л. ялне 150 çынлă карательнăй отряд янă. Карательнăй отряд çывхарнине пĕлсен, ялти самооборона отрячĕ фашистсене хирĕç çапăçма хатĕрленсе тăнă. Ку отряда хресченсем хăйсен ялне партизансем йышăнса илнĕ хыççăн организациленĕ пулнă. Винтовкăсемпе хĕçпăшалланнă çамрăк ачасем, хĕрарăмсем, стариксем карательнăй отряд пырас çул хĕррине пытанса ларнă та отряда пăшалсенчен персе вăйлăн çуптарма тытăннă.

Фашистсем, 50 çынна яхăн çухатса хăварса, Л. ялне илеймесĕрех каялла çавăрăнса кайнă.

Г. КРЫЛОВ.

Коммунистсемпе комсомолецсем—суракин организаторĕсем

Коммунистсемпе комсомолецсем массăпа ĕçлекенсем тума çăмăллăхсем, хасталантарса пысăк çĕрте ĕнăçлăх те, хăвăртлăх те çуллĕ пусăмра тăрать. Çакна шута илсе, ВКП(б) Калинински райкомĕ çураки пуçланас умĕн районири колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсене ĕçсем çураки ĕçне мĕнле ĕçлемелли, ĕç мĕнле, тĕслĕхсемпе пулса пĕтĕмпех пе тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Партийне комсомоллăн тата советăн активне çураки мобилизацилерĕ, вырăнсенчи коммунистсемпе комсомолецсене ĕçшĕн ответлă пулма хушрĕ.

Колхоз председателĕсем, коммунистсемпе бесшабашнăй большевиксен çурхи ĕçе ĕçлекенсен хушшинче... Çураки ĕçĕсем пĕтĕмпех вăйлăн пыраççĕ. ... Вырăнсенчи колхозсенче çураки кĕскĕ срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн кĕрешсе ...

Касали çураки отчетленнĕ вăрçă ... Коммунист Сантимер юлташ ĕçтен ... «Чăваш Коммуни» колхоз çураки планне 8 кун хушшинче пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕ. Планран иртсе 6 гектар тыр акрĕ. Çураки ...

Майлăхах колхозсемпе коммунистсем ... çураки тĕслĕхĕсене агитаци ĕçне ... Колхоз председателĕ çуракине ... ирттерес ... Çуракине ĕç ... Çапла пулсан та, колхозсене Степанов ... «Социализм», «Пучах», Ойкас Кипечле ... «Çĕнĕ пурнăç» колхозсене ертсе пыракан коммунистсем ... ирттерчĕç.

Районри колхозсен тĕштырăсене ака пĕтерчĕç. Халĕ вĕсем ... культуресене пахча-çимĕçсене партийне ...

Районри коммунистсемпе комсомолецсен паянхи задачи — тухă çитĕнтерсе ... ĕçсем çураки ĕçĕ хыççăн пысăк тухăç илессишĕн вăйлă ĕçлемелле.

Ф. П. РОМАНОВ.

ВКП(б) Калинински райкомĕн секретарĕ.

Пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленес ĕçри хăшпĕр кăлтăксем

СĔНТĔР. (Телефон тăрăх). Шкулсен вĕренÿ çулĕн итогне туммалли кунсем çитесçĕ. Çавăнпа та юлнă кунсен пĕр минутне те ... ВКП(б) райкомĕ пĕлÿ тĕрĕслевне пысăк вăхăтра партине совет работникĕсене 38 çынна шкулсене ... Вĕсен задачи—тĕрĕс... ачасене пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрлес ĕçне ... Шкулсенчи стена хаçачĕсем выставкисем ... Сĕнтĕр шкулĕсем, ... учительсене ... Пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленме пулăшмалла ...

Юваншкăр шкулĕнчи вĕренме пăрахнă 23 ачана çĕнĕрен вĕренме тытăннă. Вĕсемпе ĕçлеме уйрăм расписани тунă. Шкул коллективĕ çав ачасемпе ... весене тепĕр те малалла класа куçарма ĕçлесшĕн.

Анчах çав хушăра пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленес ĕçре шкулсем ... Сĕнтĕр вăтам шкулĕнчи вĕренекенсем грамматикăлла тата ... Хăшпĕр учительсем ... чака ... пĕтерсе ... ĕçленине ... пĕлÿ тĕрĕслевне хăвăрт хатĕрленмелле, ... пăхмалла.

Шкул директорĕсем ... пĕлÿ тĕрĕслевне ... учительсене ... хатĕрленме ... пулăшмалла.

Г. АКИМОВ.

Браудера тĕрмерен кăларнă

ВАШИНГТОН, майăн 17-мĕш. (ТАСС). Браудера тĕрмерен кăларни çинчен пĕлтерет. 1941 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче Эрл Браудера — США-ри компартин Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарьне, ютçĕршыв паспорчĕ ... тесе суд 4 çул хушши тĕрмере тытма ... Браудер тĕрмере пур ...

Шурă Çурт пĕлтернипе çакна калама пулать: «Пригновора çемçетни пĕрлĕхе çирĕплетме тата Браудер тĕлĕшпе хытă приговор йышăнни ăна политикăллă пулăмсемпе ... хăшпĕрсем ... сиресе пăрахма пулăшатъ», тенĕ.

Тĕнĕл держависен подводнăй лодки Мексика танкерне путарнă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Мексика хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Мексикăн премьер-министрĕ ... «Портреро де-Льяно» ятлă танкера путарнине хирĕçлесе Мексика правительстви Германие тата Японие протест пĕлтернĕ. Пĕлтерÿ тăрăх танкер 7.500 тонна водоизмещениллĕ пулнă.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Мексика правительстви протестлесе çырнă нотăна Германи, Итали тата Японие правительствисене патне янă. Ку нотара çапла каланă: «Тĕнĕл держависен хирĕç ... Мексикăн майăн 21-мĕшĕнче ... тăрăх ... вăрçă тухса ...»

пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, сенатор Гарсиа: парламентăн чрезвычайнăй сессине ... Мексика президентне пĕр шухăшлă пулнă.

Латин Америкăнчи рабочисен конфедерацийĕн председателĕ Ломбардо Толедано Мексика президенчĕ патне телеграмма янă. Ку телеграммăра вăл тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçлама ыйтнă.

Мексика пароходне путарни

НЬЮ-ЙОРК, майăн 17-мĕш. (ТАСС). Флорида штатĕнчи тинĕс влаçĕсем тăшманăн подводнăй лодки Мексика пароходне путарни çинчен пĕлтернĕ. Ку парохода Атлантика океанĕн Америкăри пĕрлешÿллĕ Штатсен çыранĕ çывăхĕнче путарнă. Пĕлтерÿре каланă тăрăх, пароход Мексика флочĕн паллисемпе тата вăйлă çутăпа пынă. Апла пулин те тĕнĕл держависен лодки ăна путарнă.

Гитлерла оккупантсем Польшăри нимĕçсене хĕçпăшаллантараççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 18-мĕш. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Польшăн тыл районесенче партизансен пысăк выступленийĕсем пулни паллă. «Кенигсбергер цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Сувалки районĕнче (Польша) партизансен отрячĕ нимĕçсен хахаргансене ... Хаçат малалла çырнă тăрăх, «Польшăри фронт çапăçусем пулса ... Познанья партизансем активлăн çапăçаççĕ, нимĕçсен транспорчĕсемшĕн пысăк хăрушлăх тăваççĕ. Нимĕç гарнизонĕсен чылай пайĕсене хĕлле тата çуркунне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçа янă пирки вĕсем вăйсăрланса юлнă. Нимĕçсен çав вăйсăрланса юлнă гарнизонĕсем çине партизансем тапăнаççĕ.

Оккупациллĕ влаçсем Польша халăхĕ хĕçпăшалланса массăллăн кĕрешĕве çĕкленессинчен хăраççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: фашистсем вара Польшăра нимĕçсене 16 çултан пуçласа 65 çул таранах пурне те хăвăрт хĕçпăшаллантарасси çинчен закон кăларнă.

«Кракауэр цейтунг» хаçатра çапла каланă: «политикăллă лару-тăру уйрăмах çивĕч пулнă пирки нимĕçсем пĕрмаях хĕçпăшаллă пулма кирлĕ», çавăнпа çав закона кăларнă.

В. М. Молотов Норвегин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Трюгве Ли господин патне янă саламлă телеграмма

Норвегин национальнăй праздникĕ кунĕ тĕлне СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов майăн 17-мĕшĕнче Норвегин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Трюгве Ли господин патне пек телеграмма янă:

«Норвегин национальнăй праздникĕ кунĕ тĕлне Совет правительстви ячĕпе тата хамăн ятпа Норвеги халăхне ... фашистла пусмăрçисен ... ирĕке тухассине кĕрешÿ ... сире тухса ... пирĕн ...»

Трюгве Ли господин В. М. Молотова панă ответлă телеграмма

В. М. Молотовăн саламлă телеграммисине ответлесе, Трюгве Ли господин çакăн пек телеграмма янă:

«Норвегин эпир паян уявлакан национальнăй праздникĕ пулнă май янă Сирĕн посланишĕн тата Норвеги халăхне пусмăрлакансене хирĕç кĕрешсе ăнăçусем тума ырă суннăшăн Сире тав тума васкатăп. Эпĕ Сире çакна шантарса калама пултаратăп: татăклă çĕнтерÿ тăвичченех çак кĕрешÿ малалла пырĕ тата Норвеги халăхĕ пирĕн тăшмана хирĕç мĕнпур халăхсен ирĕклĕхĕшĕн советсен паттăр вăйĕсемпе пĕрле кĕрешессине пысăк хисеп вырăнне хурса шутлать».

—О—

Инди халăхĕ хăй çĕршывне хÿтĕлессишĕн

ЛОНДОН, майăн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Бомбейри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Инди вăрçă хăрушлăхĕ умĕнче тăнине кура, çав хăрушлăхран хÿтĕленмелли майсем çинчен калаçса татăлас тĕлĕшпе Индири национальнăй конгресăн, мусульмансен лигин тата Хинду Махасабах партийĕн представителĕсем пĕр çĕрте пухăннă. Калаçусем хыççăн, асăннă организацисен представителĕсем тĕрлĕрен партисем хушшинчи ĕçсене пĕрпĕринпе çыхăнтарса пыма уйрăм совет тунă. Ку совет Индин хăрушсăрлăхне хÿтĕлессишĕн ĕçлет.

Тыткăнри совет çарçыннийĕсене шелленĕшĕн тĕрмене хупаççĕ

СТОКГОЛЬМ, майăн 16-мĕш. (ТАСС). «Хельсингин саномат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Финлянди президенчĕ финн халăхне тыткăнри совет çарçыннийĕсемпе калаçма тата паллашма чаракан закон кăларнă. Ку закон тыткăнри çарçыннине папирос турттарнăшăн та хытăн айăпласа тĕрмене хупма хушать.

Çураки ăнăçлăн пулса пырать

ЙĔПРЕÇ, майăн 19-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем çураки пысăк ăнăçлăн пулса пырать. Çак 4 кун хушшинче ĕçре ... нумай хут ÿсрĕ.

Паянхи кун районри колхозсем суртырисене акас плана 73 процент пурнăçланă, 48 колхозран 12 колхоз тырă акассине ĕçе вĕçлерĕç. Оборона фондне хывма пурĕ 60 гектар тырă акса хăварнă. Йĕтĕн акас план та çак кунсенчех тулать.

«Заря» колхозăн чи лайăх ĕçлекен бригадисем тĕштырăсем акас плана 113 процент пурнăçланă. Уйрăмах

тракторсем пысăк пултарулăхпа ĕçлеççĕ. Трактор ... çураки ирттерме ... ирттерчĕç. ...

Тĕштырăсене акса çитернĕ колхозсем çĕрулми лартма тытăнчĕç. «Осоавиахим», «Путиловка», «Красный фронтовик» тата ытти хăшпĕр колхозсем те суртырисене ыран-паянах акса çитереççĕ.

Ф. АРТЕМЬЕВ.

ВКП(б) Йĕпреç райкомĕн секретарĕ.

Трактористкăсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ

КАНАШ, майăн 18-мĕш. (Телефонпа). МТС-ри трактористкăсем, пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса, çуракинче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Ăмăртура 1-мĕш вырăнта комсомолкăсем пыраççĕ. Вĕсем хăйсен обязательствисене ытлашшипех тултарса ытти трактористсене пример кăтартаççĕ. Комсомолка А. Захарова М. Тимофеевăпа ăмăртать. Вĕсем СТЗ тракторпа ĕçлеççĕ. Тимофеева 5,20 гектартан кая мар сухалать. Захарова юлташ хăйĕн сменинче майăн 9-мĕшĕнче 4,65 гектар, майăн 12-мĕшĕнче—5,95 гектар, 14-мĕшĕнче—7,72 гектар сухаласа, нормăна 184 процент тултарчĕ. Çак вăхăтра горючине 15,6 килограмм перекетлерĕ. Трактористка Волкова юлташ ĕç нормине куллен 150 процент тултарать. Майăн 14-мĕшĕнче горючине 10 килограмм перекетленĕ.

Кăçал вĕренсе тухнă трактористкăсем те плана ытлашшипех тултараççĕ. Оскалачова, пĕр канмасăр 15 сехет ĕçлесе, майăн 14-мĕшĕнче У—2 тракторпа 5,15 гектар сухаларĕ. Çав кунах çамрăк трактористка Е. Яковлева юлташ СТЗ тракторпа нормăна 164 процент, Е. Иванова—200 процент тултарчĕç. О. Дмитриева, М. Иванова трактористкăсем те сменăри нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

П. БОЛЬШОВ.

МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

Районра малти вырăна тухрăмăр

ИШЛЕЙ, майăн 19-мĕш. (Телефонпа). Мамăш ялсоветĕнчи колхозсем майăн 16-мĕш тĕлне тĕштырăсене акас плана пĕтĕмпех пурнăçланă. Пурĕ 350 гектар çине суртыррисем тата пăрça-ясмăк йышши культурăсем акнă.

Ялсоветĕнчи колхозсем çуракине 8 кун хушшинче пысăк пахалăхпа туса ирттерсе районра малти вырăна тухрĕç. Буденный ячĕпе тăракан тата «Коммунист» колхоз членĕсем çуракинче фронтри пек хастарлăн ĕçлерĕç. Çуракине ку колхозсем 6 кун хушшинче вĕçленĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма ялсоветĕнчи колхозсем çураки планĕнчен ирттерсе 7 гектар акса хăварчĕç.

Паян «Коммунист» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем çĕрулми лартса пĕтереççĕ.

П. РЫКОВ

Мамăш ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Майăн 13-мĕшпе 16-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Япони флочĕпе союзниксен флочĕсем хушшинче Коралл тинĕсĕ çинче пулса иртнĕ вăйлă çапăçу хыççăн халĕ ку таврара вăрçă ĕçĕсем лăпкăрах тăраççĕ. Вăхăчĕпе сывлăшри çапăçусем кăна пулкаласа иртеççĕ.

Бирмăра Англи войскисем Чиндвин юханшывĕ тăрăх тăвалла чакса хăпараççĕ (Чиндвин — Иравади юханшывĕн йăппи). Çакăнпа пĕрлех Англи авиацийĕ японецсен юханшыв тăрăх çÿлелле, фронт линийĕ патнелле куçса пыракан войскисемпе çар грузĕсене тапăнса атакăлать.

Китайпа Бирма чиккинчи районра та çапăçусем пыраççĕ, ку районра Япони войскисем Китай çĕрĕ çинелле 80 километра яхăн саваллăнса кĕнĕ. Çапăçусем Бамопа Баошань хушшинчи çул районĕнче, Салвин юханшывĕнчен хĕвеланăç енче пыраççĕ. Япони çарĕсен пĕр колонни юханшывăн хĕвеланăç енчи çыранĕ тăрăх малалла куçса пырать. Кунта японецсене хирĕç Китай войскисем хыттăн тăраççĕ.

Китаецсем çавăн пекех Мандалайпа Лашио хушшинчи районра та японецсен тылĕнче кĕрешме чарăнмаççĕ. Кунта вĕсем темиçе тĕлте те Япони войскисен çулне касса татнă.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ **Я. А. Малик** юлташа ССР Союзĕн Японири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ пулма уйăрса лартнă.

СССР Верховный Совет Президиумĕ **К. А. Сметанин** юлташа, вăл урăх ĕçе куçнă май, ССР Союзĕн Японири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕн ĕçĕсенчен хăтарнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Совет войскисен Харьков енчи наступленийĕ

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, майăн 16-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Харьков енче наступлени туса пыракан пирĕн чаçсем малалла куçса пыраççĕ. Пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан вунăшар пунктсене нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă, вĕсенчен чылайĕшне çирĕплетнĕ вырăнсем туса хунă. Противникран тытса илнĕ радиограммăсем Германи командованийĕ çак пунктсене мĕнле пулсан та тытса тăма шутлани çинчен калаççĕ. Пĕр радиограммăра: «Хирĕç тăмалли вырăна юлашки салтак юлмиччен тытса тăмалла», тесе каланă. «Чакмалла мар», — тенĕ ыттисенче. Çапах та, пирĕн войскăсем çавтери вăйлăн хĕстернине пула, тытса илнĕ территорие тăшманăн утăм хыççăн утăм хăварма тивет. Тăшман хирĕç тăнă çĕрте пирĕн чаçсем, пултаруллăн çапăçса, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине аркатаççĕ. Чакса пыракан нимĕçсем çине пĕрмаях пирĕн авиаци тапăнса тăрать, вĕсене совет танкĕсем, артиллерийĕ тата пехоти хăвалаççĕ.

Çапăçу хирĕ фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисемпе, тăшманăн маскировка тунă орудийĕсемпе, танкĕсемпе, автомашинисемпе витĕннĕ. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен 375-мĕш полкне, 602-мĕш пехотнăй полкăн иккĕмĕш батальонне, 113-мĕш пехотнăй дивизин разведка тăвакан отрядне, 11-мĕш тата 16-мĕш трофейнăй батальонсене пĕтĕмпе пекех аркатса тăкнă.

Фронтăн пĕр участокĕнче тăшман хирĕç тăрасси пĕтсе ларнă. Пирĕн чаçсем хăваласа пынине пула фашистсем орудисене, машинăсене тата боеприпассене пăрахса хăварса, ним йĕркесĕр чакаççĕ. Пирĕн кавалеристсемпе танкистсем тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтереççĕ. Пĕр районра кăна тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çын таран пĕтерсе тăкнă.

Халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктшăн хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Çак пунктра нимĕçсем «çурхи наступлени» валли хатĕрленĕ боеприпассен тата çар хатĕрĕсен склачĕсем пулнă. Çакăнтан фашистсем хăйсен войскисене мĕн кирлине пурне те парса тăма шутланă. Халăх пурăнакан çак пункт умĕнче, ăна хупăрласа тăракан вăрмансенче мина хирĕсем, пралук карнă ретсем туса тата çĕр кукăласа тухнă.

Çак енче çапăçакан пирĕн часть, пур чăрмавсенчен те пултаруллăн иртсе, тăшмана тылран пырса çапнă. Халăх пурăнакан пункт умĕнче тунă огневой точкăсене нимĕçсен часах хăварма тивнĕ. Хĕл каçах тунă дзотсем вĕсене халĕ нимĕнле усă та кÿмен. Тăшман хăйĕнчен иртсе кайнă пирĕн чаçа минометсем тата йывăçсем çинчи автоматчиксем пенипе чарса лартма хăтланнă, анчах пирĕн боецсем вăрман тăрăх тухса «куккуксене» асăрханă та вĕсене пĕтернĕ.

Часть командирĕ халăх пурăнакан пункта вăхăтра çухатмасăр атакăлама йышăннă, çав вăхăтрах противника пĕтĕмпех хупăрласа илсе хăрушлăх тăвас тесе, темиçе подразделение хысалтан янă. Урамсемпе переулоксенче хĕрÿ çапăçусем пуçланса кайнă. Пирĕн боецсем хăвăрт куçса пынă. Çапăçури юлашки минутсенче тăшман хăйĕн хăшпĕр склачĕсене тивертсе яма пăхнă, анчах кунта пырса çитме ĕлкĕрнĕ совет автоматчикĕсем нимĕçсен вăрăхурахĕсене хăваласа янă. Халăх пурăнакан пысăк пункта сехет çурă хушшинче çавăрса илнĕ.

Нимĕçсен флангĕпе тылĕнчен персе тăнă чух пирĕн миномет мĕнле хаяр хĕçпăшал пулса тăнинчен юлашки çапăçусенче пĕрре çеç мар тĕлĕнме тиврĕ. Çак эпизода кăтартса пама юрать. Тапăнса пыракан пирĕн часть тăшманăн калама çук вăйлă оборонине тĕл пулнă. Боецсен çĕре чавса кĕрсе выртма тивнĕ. Çак вăхăтра минометчик сержант Бенуадз, минометна çурăм çине çавăрса хурса тата минăсем чикнĕ лотока илсе, тăшманăн флангне кĕнĕ, çакăнтан кĕтмен çĕртен пеме пуçланă. Çакă нимĕçсене питĕ хăратса пăрахнă, вĕсем тапăнса пыракансем валли çул уçса хăварса, часах каялла чакма пуçланă.

Пирĕн чаçсем тапăнса пынине чарса тăрас тесе, фашистсем çапăçăва ытларах та ытларах танксем кĕртеççĕ, хăйсен резервĕсене пĕтереççĕ. Ĕнер пирĕн пĕр часть çине танксем темиçе хут та тапăннă. Кашни расрах тăшман пирĕн чаçа хирĕç 30—40 машинăран тăракан çĕнĕ группа ярса тăнă, анчах кашни расрах пирĕн танксем, артиллери орудийĕсем тата противотанковăй хĕçпăшалсем вĕсене пĕтермелле персе тăнă. Нимĕçсен каялла çавăрăнма тивнĕ.

Тепĕр районра нимĕçсем пирĕн подразделение хирĕç 23 танкпа контратакăна кĕме хăтланса пăхнă. Вĕсене танка хирĕç перекен хĕçпăшалсен расчечĕ кĕтсе илнĕ. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă, вăл тăшмана пĕтĕмпех парăнтарнипе вĕçленнĕ. Нимĕçсен 7 танкне çĕмĕрнĕ. Кунта килсе çитме ĕлкĕрнĕ пирĕн танкистсем тăшманăн татах 7 машинине пĕтерсе тăкнă. Танксем хыççăн куçса пынă нимĕçсен пехотине сирсе пăрахнă. Çапăçун çак хирĕнче салтаксемпе офицерсен 490 виллине выртса юлнă. Пирĕн боецсем кунта нимĕçсене 100 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Капитан П. ОЛЕНДЕР.

(**«Красная звезда», майăн 17 мĕш**).

Народный Комиссариат Финансов Чувашской АССР

на основании Указа Президиума Верховного Совета Союза ССР от 10 апреля 1942 года «О местных налогах и сборах» и постановления Совнаркома РСФСР от 7 мая 1942 года в дополнение к об'явлению Наркомфина Чувашской АССР об обложении местными налогами предприятий, учреждений, организаций и домоуправлений, помещенному в газете «Чăваш Коммуни» от 16 мая 1942 года,

ОБ'ЯВЛЯЕТ

Порядок обложения отдельных граждан налогом со строений, земельной рентой, сбором с владельцев транспортных средств и сбором с владельцев скота.

I. НАЛОГОМ СО СТРОЕНИЙ облагаются жилые дома, склады и всякого рода другие строения (с обслуживающими их постройками), принадлежащие отдельным гражданам.

От налога освобождаются:

а) строения, находящиеся в личной собственности колхозных дворов, а также строения хозяйств единоличных крестьян и других нечленов колхозов, подлежащих обложению сельскохозяйственным налогом;

б) строения, принадлежащие военнослужащим рядового и младшего начальствующего состава и их семьям, если в этих строениях не сдаются в наем помещения;

в) строения, принадлежащие пенсионерам или членам их семей, не имеющим никаких источников дохода, кроме пенсии, строений и подсобного сельского хозяйства на приусадебной земле, если сам пенсионер проживает в этом строении и в семье нет совместно проживающих с ним трудоспособных членов семьи, кроме домашней хозяйки и учащихся.

Налог взимается в размере 1% стоимости строений и исчисляется налоговыми инспекторами районных (городских) финансовых отделов. Исчисление налога производится по той оценке, по которой начислялись страховые платежи в истекшем году, а при отсутствии страховой оценки — по стоимости, определяемой налоговыми органами.

Налог уплачивается равными долями в три срока: 20 марта, 20 апреля и 20 мая.

Примечание: Доначисленная в текущем году разница налога должна быть внесена в течение 15 дней со дня вручения платежного извещения.

II. ЗЕМЕЛЬНАЯ РЕНТА взимается за застроенные и незастроенные земли, предоставленные отдельным гражданам в бессрочное пользование и по договорам о праве застройки.

От земельной ренты освобождаются земли, обслуживающие строения, освобождаемые от налога со строений.

Ставки земельной ренты за квадратный метр установлены в следующих размерах: гор. Чебоксары — 9 коп., города Алатырь, Канаш и Шумерля — 6 коп., остальные города, рабочие поселки, сельские местности — 4 коп.

Земельная рента исчисляется по каждому отдельному участку со всей площади, входящей в пределы данного участка, включая площадь под оврагами, прудами и т. п.

Если участок состоит из частей, находящихся в раздельном пользовании нескольких лиц, то по каждой такой части земельная рента исчисляется отдельно. Площадь земли, которая находится в совместном пользевании этих лиц (например, двор), распределяется между ними пропорционально площади строений, находящихся в раздельном владении.

Земельная рента исчисляется и уплачивается в том же порядке и в те же сроки, как и налог со строений.

III. СБОР С ВЛАДЕЛЬЦЕВ ТРАНСПОРТНЫХ СРЕДСТВ взимается в следующих размерах в год:

Наименование об"ектов обложения	Гор. Чебоксары	Прочие города	Рабочие поселки
1. Моторные лодки с каждой силы	20 руб.	15 руб.	10 руб.
2. Мотоциклы с каждой силы	10 руб.	7 руб.	5 руб.
3. Велосипеды	10 руб.	7 руб.	5 руб.
4. Лодки и ялики:			
а) используемые в виде промысла для перевозки людей	40 руб.	30 руб.	20 руб.
б) в остальных случаях	10 руб.	7 руб.	5 руб.
5. Грузовые лодки	75 руб.	50 руб.	25 руб.
6. Выездные и рабочие лошади	200 руб.	150 руб.	100 руб.

Примечание: С владельцев моторных лодок, мотоциклов и лошадей, приобретенных во втором полугодии, сбор взимается в половинном размере.

От сбора освобождаются граждане, у которых лошади и другие животные учтены при обложении их хозяйств сельскохозяйственным налогом.

Сбор взимается при выдаче номерных знаков на транспортные средства.

IV. СБОР С ВЛАДЕЛЬЦЕВ СКОТА — коров, а также нетелей в возрасте старше 2 лет и рабочего скота (кроме лошадей), не используемого в извозном промысле — быков и волов в возрасте старше 2,5 лет, взимается в следующих размерах в год: крупный рогатый скот — город Чебоксары — 40 руб., прочие города 30 руб. и рабочие поселки — 20 руб.

Сбор взимается при регистрации скота.

Примечание: В связи с установлением новых ставок разницу владельцы транспортных средств и скота должны уплатить в 15-дневный срок со дня вручения им платежного извещения.

V. ОТВЕТСТВЕННОСТЬ ПЛАТЕЛЬЩИКОВ МЕСТНЫХ НАЛОГОВ И СБОРОВ. С граждан, не уплативших в установленные сроки местных налогов и сборов, за просрочку платежа взимается пеня в размере 0,2% за каждый день просрочки, и в отношении неплательщиков принимаются меры принудительного взыскания, установленные для взыскания налогов.

НАРКОМФИН ЧУВАШСКОЙ АССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ял хуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 483 Гор. Чебоксары, типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 [illegible]